3990
47-88



С. ЭЛКЕР

# ЮМАХСЕМ



ЧĂВАШГОСИЗДАТ • 1947

С. ЭЛКЕР

[illegible]
10 декабря 47 г.
№ 103

# ЮМАХСЕМ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ ШУПАШКАР
1947

## ХЫТКУКАРСЕМ

Тахҫан ӗлӗк пӗр ялта,
кайри касра, хыҫалта,
пуранна, тет, паллӑн мар
икӗ ватӑ хыткукар, —
икӗ ватӑ мӗштӗркки,
карчӑкпа ун старикки.
Хытти,—тенӗ старикне,
Типпи,—тенӗ карчӑкне.
Пулнӑ вӗсен тырӑ та,
пулнӑ тӗрлӗ пурлӑх та;
хӑйсене май савӑнма,
тутӑ, питӗ пуранма
пурте ҫитнӗ темелле:
ӗҫмелле те ҫимелле.

Анчах та ҫак кукарсем
пурнӑҫ шайлӑхне пӗлмен,
пурлӑх пур ҫинчен вӗсем—
ыррӑн тумланман, ҫимен:
капӑр яшлӑх тумтирри
выртнӑ арча тӗпӗнче,
усал кӗве хурт тӗрри
тунӑ вӑл тумсем ҫинче.
Халтӑркана кӗлетре,

чăланра е çенĕкре
ларнă вĕсен çултан çул
йӳçнĕ, пăнтăхнă сĕт-çу.
Çав-çавах та апатне
кунне пĕрер çинĕ чух,—
типпĕ çăкăртан пуçне
çимеллийĕ урăх çук.
Кăвакарнă çăкăрне
çинĕ шывпа ислетсе,
выçлăн-тутлăн ĕç патне
тухнă чирлĕн эхлетсе.

Çитсе çапнă выçлăх çул.
Хаклăланнă пур тырпул...
Пушшĕ хытнă хай Хытти:
çăкăрне те вăл çимен;
çутçанталăк, кун çутти
ăна пĕртте илĕртмен.
Карчăкне вăл час-часах
выçă лартнă кунĕпех.
Леш çимешкĕн ыйтсанах
мăкăртатнă, мур пекех.

Карчăк ирхине пĕрре
урай шăлнă шăпăрпа.
Старикĕ ун кĕтесре
шăппăн ларнă тем шутпа.
Шăпăр шунă майпала,
сасартăк ун вĕçĕпе—
кăлтăр-р куснă малалла
кĕрпе пĕрчи—пĕр кĕрпе.

Хытти хӑвӑрт, кушакла,
якӑшт! тӑрса сикнӗ те,
ҫав кӗрпене илнӗ те
кайса ларнӑ каялла.
„Карчӑк, карчӑк, тур парать:
кӗрпе пӗрчи тупрӑм эп!
Ха, ӑҫтан вӑл, хӑямат,
килсе лекнӗ? Тӗлӗнеп...
Ну, халь пӑтӑ пӗҫерер.
Турӑ пачӗ ахаль мар,
пӑтӑ пулӗ чип-чипер!—
тенӗ старик, хыткукар.
Карчӑкӗ те савӑнсах
пӑхкаланӑ кӗрпене,
ывҫӑваррине хурсах
хыпашланӑ ҫав пӗрче...

Кӑвайт чӗртнӗ вучахра,
ҫакса янӑ мӑн хуран.
Шывне тултарнӑ вара
хуран хӗррийӗ таран.
Лакӑртатса, ҫавранса
шыв вӗренӗ сиккипех,
мӗскӗн кӗрпи саланса
пиҫсе ҫитнӗ пӗтӗмпех.
Ҫиме ларнӑ хайхисем
пӗчӗк сӗтел хушшине,
пиҫнӗ кӗрпене вӗсем
хунӑ чашӑк хӗррине.
„Сивӗнтӗр-ха. Лар пӑртик.

Ҫийĕпĕр ак пайласа,"—
тенĕ карчӑкне старик,
сивĕ куҫпала пӑхса.
Ларнӑ вара чылайччен
тутлӑ сурчӑка ҫӑтса,
ларнӑ кĕрпене пӑхса
старик чунĕ каниччен.

Пĕрчĕ ҫитнĕ сивĕнсе,
чарӑнать вӑл пӑсланма.
Старик, кашӑкне илсе,
тӑнӑ ӑна пайлама.
Шӑп та лӑп ҫак самантра
вĕҫнĕ пынӑ пĕр шӑна,—
ҫиме тӑнӑ апата
пӑсса хунӑ ҫак „хӑна".
Ирсĕрскер вӑл, сĕмленсех
ларнӑ чашӑк хĕррине;
ҫиме тӑнӑ пикенсех
пиҫнĕ кĕрпе пĕрчине.
„Ҫап, старикĕм, ҫап часрах!
Ҫисе ячĕ-ҫке пӑтта",—
тенĕ карчӑк кӑшкӑрсах.
„Ӑҫтан килчĕ вӑл кунта?!"
Старик, хыпӑннӑ майпа,
аллинчи мӑн кашӑка
сулнӑ янӑ пур вӑйпа,—
ҫат! тутарнӑ чашӑка.
Ҫапнӑ вӑл хыт тарӑхса
сĕмсĕр пуҫлӑ шӑнана,

анчах чашăк çурăлса
сапаланнă таврана.

Сыввăн хăтăлнă шăни
шикленмен те çав, тăшман!
Хăйне вĕлерме тăни
ăна ним те хăратман.
Сывлăшра вăл ярăнса
вĕçсе илнĕ çÿлелле,
унтан ларнă вăл анса
карчăк çут çамки çине.
Астуман та хăй старик
шăна ăçта ларнине,—
урса çитнĕ ват ăшчик
чарайман хăй çиллине—
яра панă кашăкпах
карчăка ват çамкаран.
Карчăк ÿкнĕ çавăнтах,
пĕр сăмах та калайман.
Леш шăнийĕ çав-çавах
тăрса юлнă сып-сывах.
Мăшкăласах тенĕ пек,
старик пуçĕ çийĕпе
вĕçсе илнĕ вăл малтан
унталла та кунталла,
вăра çĕмрĕк кантăкран
тухса тарнă тулалла.

„Ах! ах!—тенĕ хыткукар.—
Мĕн-ха турăм?.. Тур каçар!
Ватрăм сăрлă чашăка,

Катрăм йывăç кашăка,
Кăнтрăм савнă карчăка...
Ку инкеке куриччен,
вилмеллеччĕ хам—тăмпай!"—
тенĕ те вăл, пуçĕнчен
çапнă хăйне ывăспа.
Пуçĕ чан пек янтраса
хăй те ӳкнĕ тăсăлса.
Пӳрчĕ юлнă пушанса.

## ЫЛТТĂН ПАШАЛУ

Тахçан ĕлĕк, пĕр енче,
хирпе вăрман чиккинче
пурăннă, тет, ват çынсем—
мучипеле кинеми.
Ĕçчен пулнă, тет, вĕсем,
кăмăлĕсем—ытарми...
Пĕрре выçлăх çулхине
калать мучи карчăкне:
„темĕн, кăçал выçлăх çул—
пирĕн пурнăç сӳнет пуль!
Ăшчик ытла çуннăран,
ытахаллĕн ларасран,
каям халĕ вăрмана,
кӳрем вута эп сана.
Эсĕ пур пек çăнăхран
пĕçерсе хур пашалу.
Каçпала, хам таврăнсан,
çикелĕпĕр... Ну, асту...
Эп каям-ха“, терĕ, тет,
лаша кӳлсе кайрĕ, тет.

Карчăк ĕçе пикенет:
пур çăнăхне пуçтарса,
чуста çăрса, вут хутса,

пĕр пашалу пĕçерет...
Çак самантра çенĕкре
кăштăртатрĕ çын ури.
Кĕрет старик, кĕтесре
юрлать кĕлĕмçĕ юрри.
„Çук-çке... Хамăр та выçах.
Ак юлашки пашалу.
Ку пĕтсессĕн, ыранах
çиме тĕпренчĕк те çук!“
терĕ карчăк кĕлмĕçе.
Хăй çавах та çемĕçсе,
пашалуне кăшт хуçса
кĕлмĕç старике парать.
Старик, кăмăлне уçса,
ăна ăшшăн тав тăвать.
„...Пĕлеп эсир выççине.
Анчах çавах та мана
патăн хăвăн татăкна.
Куртăм—эсĕ ыррине.
Уншăн сире ăраскал
тивĕ пин хут ытларах...“
тет те старик—шур сухал,
тухса каять хăвăртах.
Карчăк пăхать—пашалу,
ним тивмен пек, çап-çаврах!
Тĕлĕнет вăл: „Мĕнле ку?!
Хуçсах патăм-çке, чăнах!?“
Ак вăл ăна сивĕнме
хурать чӳрече çине;
пӳртне уçă çил кĕртме

уçса хурать каҥтăкне.
Анчах пĕчĕк пашалу
кинемейшĕн, темĕнле,
тĕлĕнмелле пулчĕ ку.
Вăл выртмарĕ нимĕнле.
Хурсассăнах—чăлт! сикет,
тухса ÿкет тулалла,
çĕре çитсе перĕнет—
кусма пуçлать уялла.
Вата карчăк хыпăнсах
сиксе тухрĕ пÿртĕнчен,
тытас тесе вăйпалах
чупрĕ унăн хыçĕнчен.
Пашалувĕ, чунлă пек,
тăмасть, тÿнмест, тыттармасть,
кăлтăрмач пек, пĕр йĕрпе
ыткăнать вăл, чарăнмасть.

Чупсан, чупсан, çаврăнса
тухать ана йăранне,
йăран тăрăх вăркăнса
кайрĕ сĕм вăрман енне.
Хăвăрт чупса пынипе
унăн тĕсĕ улшăнать,
ытла хĕрсе çитнипе
ылттăн тĕс вăл йышăнать.
Кайрĕ, кайрĕ пашалу—
йăлтăр-йăлтăр çиçкĕнсе,
хуть хăвала, хуть мĕн ту,—
никам тытас çук çитсе!

„Эх, ку кĕлĕмçĕ этем—
çав тухатрĕ пулмалла...
Ăçтан ăна эп çитем?
Мĕскер ĕнтĕ курмалла?!“
Карчăк тăчĕ ывăнса,
аллисене шарт! çапать;
пăхать, юлать хурланса,—
пашалушăн кулянать.

Çакна курчĕ пахчаран
шăппăн ларнă шур кушак,
мăшкăлать вăл карчăкран:
„Эх, йӳтенĕ ват шăмшак,
санран-и вăл тытасси?
Хăм пулсассăн—эп çавна...
Пĕрре кăна чупасси,
çаклататăп эп ăна...“
терĕ кушак, ялт! сикет,
хай пашалу хыçĕнчен
çил ачи пек вĕçтерет.
Чупрĕ, чупрĕ нумайччен—
çитеймерĕ вăл хуса,
чикеленчĕ ывăнса.

Кайрĕ, кайрĕ пашалу
йăлтăр-йăлтăр çиçкĕнсе,
хуть хăвала, хуть мĕн ту,—
кушак тытас çук çитсе!
Çакна курчĕ аякран
çамрăк йытă, урш вĕшле.
Мăшкăлать вăл кушакран:

„Эх пуклак пуç, вил шĕшлек,—
санран-и вăл тытасси!
Хам пулсассăн—эп çавна...
Пĕрре кăна чупасси!—
çаклататăп эп ăна,"
терĕ йытă, ялт! сикет,
хай пашалу хыçĕнчен
çавраçил пек вĕçтерет.
Чупрĕ, чупрĕ нумайччен,
çитеймерĕ вăл хуса,
чикеленчĕ ывăнса.

Кайрĕ, кайрĕ пашалу
йăлтăр! йăлтăр çиçкĕнсе,
хуть хăвала, хуть мĕн ту—
йытă тытас çук çитсе!
Калтăрмач пек вăл кусать
хура вăрман хĕрнелле,
кайсан-кайсан çаврăнать,
çуртри пусси еннелле.
Çакна курчĕ вăрмантан
канса ларнă ват куян*,
вăл кулмарĕ йытăран,
мухтанмарĕ те малтан.
Шăппăн, шăппăн ыткăнса
тухрĕ куян вăрмантан,
хăваларĕ ярăнса
пашалăва хыçалтан.
Ылттăн тĕслĕ пашалу

---

**Куян—мулкачă.*

çуртри пусси тавралла
çурри тухрĕ çавранса,—
вăл чупатчĕ малалла.
Анчах та хай ват куян
çывхарать те çывхарать,
ял еннелле çавăрнсан—
ăна çитсе вăл тытать.
Куян çитсе тытсанах
ылттăн тĕслĕ пашалун
тĕсĕ улшăнчĕ часах,—
сăнĕ тĕксĕмлечĕ ун.
Хĕпĕртерĕ ват куян:
хыпса çыртрĕ вăл ăна,
кăштах канса вăй пухсан,—
кĕрсе кайрĕ вăрмана.

Сикет куян ерипен
хура вăрман çулĕпе,
ăна хирĕç сĕмлĕхрен
тухать пĕр лав туллипе.
Лавăçи ку—кил хуçи,
тухать вутă тиесе.
Курать акă ват мучи—
пырать куян сиктерсе.
Тулли лава тĕл пулсан,
куян пăранса иртет;
çак вăхăтрах лавçăран
чĕннĕ сасă вăл илтет:
„Ыр пулсамччĕ, куян тус,
сутчĕ мана çăкăрна...

Ме сана ак—виçĕ пус.
Ĕмĕр манмăп ырлăхна.
Урăх манăн укçам çук,—
ăнлансамчĕ—выçлăх çул!.."
терĕ мучей йăлăнса.
Куян тăчĕ чарăнса.
Чăн-чăн этем чĕлхипех
вăл каларĕ старике:
„Ăнланатăп эп сана,
сире йывăр пурăнма.
Ме ак, илех эс ăна.
Укçу мана кирлĕ мар.
Эп пурăнăп вăрманта
йывăç хуппи кышласа".

Пашалува савăнсах
старик хучĕ лав çине,
ыр куяна тав туса
хускатрĕ çеç лашине.
Лăп та шăп çак самантра
вĕлтĕрт! сикрĕ пашалу,
çиçсе илчĕ сывлăшра
ылттăн тĕслĕ ялкăшу.
Çĕр çине хыт тĕрĕнсе
катăлать вăл ик пая,
кашни пайĕ çитĕнсе
танашаççĕ пĕр шая;
иккĕш те вăр-р! çаврăнса
турĕç шăппăн канашлу,
икĕ пĕр пек катăкран

пулчĕ икĕ пашалу.
Пĕри, çуттăн ялкăшса,
кусса кайрĕ уялла;
тепри, сӳнсе, лăпланса,
тăрса юлчĕ куяна...

Сĕм вăрмана хăварса
уй тӳпине хăпарсан,
мучей курать—инçетре,
çуртри пусси хĕррипе
хĕвел шевли пек çиççе
хай пашалу вăркăнать,
ун çиййĕнчен хĕм вĕççе
йĕри-тавра сапăнать!
Тĕлĕннипе аптраса
мучей чарчĕ лашине,
хытса кайсах, тăп тăрса
пăхать пашалу çине.

Инçетелле шăнк хытсах
пăхса тăнă вăхăтра,
вăл сисмен те—çывăхрах
шур сухаллă çын пырать.
„Мĕне капла антăхсах
пăхатăн эс, ыр хăта?“—
ыйтать çак çын куларах,
чарăнса пĕр саманта.
Пирĕн мучей хумханать,
хыпăнса пек, вăл калать:
„Çитмĕл çул эп тăрăшса
пурăнатăп çак çĕрте,

анчах кун пек тамаша
хальччен курман ӗмӗрте!
Ав,—пашалу вирхӗнет,
вирхӗнет те хӗмленет!
Мӗскере ку пӗлтерет?
Тӗлӗнетӗп эпӗ", тет.
Çулçӳревçӗ тинкерсе
пăхрӗ типӗ хир енне,
кăшт сăнарӗ, куç хӗссе,
хай пашалу чуппине;
унтан темӗн шутласа
сулчӗ шурă туйипе,
старик патнерех пырса
каларӗ вăл ерипе:
„Ку пашалу вăл, хăта,
хир хăватне вăратать;
тырпул пулман вырăнта
çӗр сӗткенне пуçтарать...
Çӗр сӗткенне пуçтарать—
тӳрӗ чунлă старикпе
унăн ырă карчăкне
тăрантарма вăй шырать..."

Старик, пушшех тӗлӗнсе,
ыйтать унран тӗпчесе:
„Ах, камсем-ши вăл çынсем?!
Пирӗн ялтах-ши вӗсем?
Ырă чунлă тӳр этем
пур-ши халӗ пирӗн... тем?"
Анчах вата çулçӳрен



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

урӑх калаҫса тӑмасть,
„Пур-ха...“ тет те ерипен,
хӑй ҫулӗпе уттарать.
Ҫак тӗл пулнӑ ют сынпа
халапланнӑ вӑхӑтра,
шухӑш ҫавраннӑ майпа
мучей пӑхман хӑй тавра.
Ылттӑн сӑнлӑ пашалу
кусса тухнӑ ҫул ҫине,
вутлӑ-хӗмлӗ ялкӑшу
сирпӗтет вӑл пур енне.
Тӳрем ҫулпа варкӑнса
кусатчӗ ҫак килнелле,
уй тӳпинче чарӑнса—
ялтӑрт! сикрӗ ҫӳлелле.
Сулӑмпала каялла
ҫӗре ӳксе ҫапӑнсан,
чӑл-пар! кӑна тавралла
саланать вӑл вакланса.

Йӑлт арканнӑ пашалун
ылттӑн сӑнӗ ҫухалать,
анчах кашни пайӗ ун
уйрӑм пашалу пулать.
Кашни вак тӗпренчӗкрен
пысӑк ҫаврашка пулса,
ҫӗршерӗн мар, пинпелен
вӗсем кайрӗҫӗ чупса,
Вӗсем кайрӗҫӗ чупса
ӑҫтан тухнӑ—ҫав киле,

кӗрсе кайрӗҫ капланса
хăйсен хуҫин картишне...
Ватă карчăк, кил хуҫи,—
стариккишӗн чун уҫҫи—
ку самантра кулянса,
выҫăпала аптраса
ларнă хăйӗн килӗнче—
пушă кӗлет умӗнче.
Вăл ларнă шăп, тӗмсӗлсе,
ӗҫчен старикне кӗтсе.
Ушкăн ушкăн пашалу
кусса пынине курсан,
карчăк хытрӗ: „Мӗнле ку?!“—
тесе илчӗ ҫех аран.

Пашалусем хирӗнсех
кӗлет умне пухăнсан,
тӗлӗнсе те шикленсех
вăл хускалчӗ вырăнтан.
Вăл хускалчӗ вырăнтан,
тăчӗ, уҫрӗ хăвăртрах
пуш кӗлечӗн алăкне.
Ӗненмест-ха вăл ҫавах,
„тӗлӗкре пуль“ тет хăйне.
Пашалусем хăйсемех
кӗрсе кайрӗҫ кӗлете,
шăкăр-шăкăр йӗркипех
сикрӗҫ, выртрӗҫ пӳлмене.
Ик-виҫ пӳлме, ҫын пӗлми
темле вăрттăн хăватпа,

тулса ларчĕç тўпемми
пашалупа, тырăпа...
Мучей килне таврăнать
пĕр лав вутă тиесе,
аллисене шарт! çапать—
ăнланайми тĕлĕнсе.

Пурăннă, тет, нумайччен
çак мучейпе кинеми.
Вĕсен пĕр кĕлетĕнче
тырă выртнă иксĕлми.
Вĕсем пулнă пит ĕçчен,
кăмăлĕсем пит аван;
такама та, хĕн килсен,
пулăшмасăр хăварман.
Хăйсем ырă пулнăран
пурте савнă вĕсене,
ăрăскал та пулнăран
ăнăçтарнă пурнăçне.

Пĕр телейлĕ вăхăтра
Эп те пултăм хăнара
çав мучейсем патĕнче.
Лартам сĕтел хушшинче.
Сĕчĕпе те сар çупа,
шерпетпе те сăрапа
хăналарĕç тăванла.

# ТĂРНАККАЙПА ТĂРНАСЕМ

Ватă мар-ха, яш та мар,—
çÿçĕм шурăхнă самай,
курасса çав сахал мар
куртăм эпĕ—Тăрнаккай.
Пĕр нушасăр пурăнаçпа
лайăх пурăнас тесе,
çăмăл ăслă пуçăмпа
мĕн пăхман эп ĕçлесе!
Платникре те каскаларăм,
атă-пушмаксем юсарăм,
çĕвĕç пултăм—çĕв çĕлерĕм,
ямшăкра та эп çÿрерĕм.
Пĕр ĕçне те юратмарăм,
çăмăлрах ĕç тек шырарăм...
Нихăш ĕçĕм те ăнмарĕ,
ыррăн пурăнса пулмарĕ.
Хам ят çĕрĕ пулманран,
çĕрĕçне эп тытăнман.
Пăхкалатăп та куратăп:
акса пăхмалла тырпул!
Хăшпĕр çын, ав, тырăпа та
мул пухать тек çултан çул.
Çакăн хыççăн, пĕр çулне,

çĕр ĕçне эп хаваслантăм,
хĕл иртсессĕн çуркунне,
çур ана пек çĕр туянтăм.
Акиччен хам шухăшлатăп,
сасăпах та калаçатăп:
„Акăп ĕнтĕ сеЛĕ мар,
тулă та мар, ясмăк мар,—
пысăк тупăш паракан
хаклă тырă... Мĕн аван?
Сĕлĕ хакĕ пирĕн йӳнĕ.
Урпа, пăри—тупăш кӳмĕ.
Тулă—пирĕнте пулмасть.
Хуратул та ăнăçмасть.
Паллă, пур пек тырăран
чи хаклийĕ халь—пăрçа.
Пирĕн хирте вăл ялан
пулаканччĕ ăнăçса..“

Сухаларăм анана,
кайса акрăм пăрçана.
Ăшă çумăр çунăран,
пăрçи шатрĕ пит аван.
Хулăм хăмăл яванса
пĕр пек тикĕс çитĕнет,
çĕр çумĕпе йăванса
чечекпе вăл витĕнет.
Саванса та киленсе
кĕтеп пăрçи пуласса,
асра та çук тем çитсе
темле инкек курасса.

Халь питех те кулăшла,—
пулчĕç мыскара-ĕççем.
Таçтан тухрĕç çав çулла
çăткăн выçă тăрнасем:
ушкăн-ушкăн, картипе
çӳлтен вĕçсе çӳретчĕç,
тăринк-тăринк! сассемпе
уя хире çĕмретчĕç.

Пăрçа пулса çитеспе
пĕрре тухрăм хирелле,
çуртри пусси çулĕпе
пырап пăрça патнелле.
Ак çитетĕп... сывхаратăп.
Анчах, мĕн-ха эп куратăп:
пăрçа ани варринче—
шакăр-р темле курпунсем!
Çăра пăрçа çиййĕнче
мăкăльтетеççĕ вĕсем...
Хăвăрт çиллĕм тулса килчĕ,
чĕреме тем касса илчĕ.
Чупрăм, чупрăмваскасах,
ятлаçатăп сасăпах:
„Эх ку, камăн сыснисем
кĕрсе кайнă кĕтӳпех?!.
Е чăрусăр ачасем
ашкăнаççĕ, анчăк пек!
Ай, тытсассăн, кусенне
сӳсе илĕттĕм тирне!“—
шухăшлатăп тарăхса,

хам чупатăп пăшăхса.
Пит инçех те ман юлманччĕ,
вăрă ушкăнĕ пăлханчĕ.
Халь куратăп лайăхах,
вĕсем пурте пĕр майлах:
ни ача мар, сысна мар—
варăм мăйлă, тунахар...
ыккĕн виççĕн юнашар
янк! тăраççĕ карăнса,
чупкалаççĕ такăнса.
Пĕлтĕм енĕ, ку мурсем
пурте çăткăн тăрнасем!
Ак пĕр харăссăн вĕсем
йăнк-янк! сиккелерĕç те,
кăр-рăнк! кăрлинк! терĕç те
вĕçрĕç кайрĕç çӳлелле,
хура вăрман çинелле.
Юлтăм эпĕ ахлатса,
пĕççĕмсене шарт! çапса.

Çитрĕм хам ана çине,
чупрăм пĕр вĕçрен вĕçне,
пăхкалатăп пăрçана—
паллама та çук ăна!
Пур çĕрте те тĕшĕрӳ,
пĕтнĕ ларнă ешĕрӳ.
Ваннă хăмăл хушшинче
тăрна тĕкĕ варкăшать,
пур тĕлте те çĕр çинче
тăрна тислĕкĕ выртать...

Каç пулать те, ир пулать.
Пуçăм кутăн çаврăнать.
Тупрăм пăшал кўршĕре,
кайрăм каллех хай çĕре.
Çăткăн выçă кайăксем
анса тулнă ушкăнпех,
ашкăнаççĕ халь вĕсем
мăшкăл туйĕ тунă пек.
Кăшкăраççĕ, çихĕреççĕ,
тăлтти-талтти сиккелеççĕ...
Кам-ха пĕлтĕр, мĕн тесе
савăнаççĕ çав тĕрлех?
Те эп пынине сиссе
йĕкĕлтеççĕ юриех?
Йăпшăнатăп, шăвăнатăп,
шăрăхпа хам пăшăхатăп.
Шăппăн, шăппăн çĕкленсе
сĕлĕ çиййĕн пăхкалап,
пăшалпа тек тĕллесе:
„Ах, хăшне?—теп, шухăшлап.

Сăтăр кайаксем чее мĕн:
сисрĕç шăршă иĕлнĕ пек;
вăрăм майсене пĕртемĕн
янк! тăратрĕç ушкăнпех.
Пеме тăтăм—ал çыхланчĕ.
Çак самант шăп ушкăнран
пĕр тăрниййĕ сасă пачĕ.
Карр! çĕкленчĕç вырăнтан
алла-утмăл тăрнашка—

аллă-утмăл купташка.
Ман пăшаллăм та кĕрлерĕ
тăрнасем кăшт хăпарсан,
тĕк пĕрчийĕ те ӳкмерĕ
пысăк тĕркĕш ушкăнран.
Юлтăм каллех каçăралса,
куçăмсене чалхăртса.

Çакăн хыççăн виçĕ кун
эп сыхларăм пăрçана.
Вĕçĕ çук ман тарăхун:
каçармастăп „тăшмана!"
Ах, çавах та хуралпа
ĕç тухмарĕ ман кунта:
виçĕ талăк, виç кунччен
пĕр тăрни те çывхармарĕ;
яванаççĕ пит çӳлтен;
халь хăйсем мана сыхларĕç.
Çĕрти этем мĕлкине
тăрнасем час асăрхаççĕ,
пĕр сикмесĕр ларнине
пĕлĕт тӳпинчен кураççĕ.
„Çук, тухмасть ĕç ку майпа,
урăх мел ман тупмалла"
терĕм те эп, тарăхпа
тăтăм, утрăм ялалла.

Çав куннех-ха, ял çинче,
чи хисеплĕ çынсенчен
илтрĕм эпĕ пĕр канаш.
Урăх ан та хураллаш!

Акă мĕн çеç тумалла:
вăлашкасем тупмалла
тата эрех илмелле.
Вара пĕр-пĕр ирпеле
эрех вăлашкисене
пăрça ани варрине
вырнаçтарса лартмалла.
Кунта шыв та хушмалла.
Çисе кўпнĕ тăрнасем
шывшăн çунаççĕ вĕсем.
Уяр, шăрăх кунхине,
хыт антăхса çитнĕрен
ĕçеççĕ те эрехне,—
хăпаймаççĕ çĕр çинчен.
Ку мел пуринчен аван:
мĕнчул тăрна—йăлт тытан!

Шутласа мĕн эп тăмарăм,
çак ĕçе тума васкарăм.
Илтĕм вуна вăлашка,
эрех—виçĕ чаплашка.
Шăнкăр уяр ирхине
турăм мĕн тумаллине...
Пулчĕ питĕ шăрăх кун.
Кăшт кансассăн, кăнтăрла
(тўсеймест-çке кўтнĕ чун!)
тухса кайрăм уялла.
Ĕç ăнасса кĕтнипе,
илтĕм çирĕп тилхепе.
Пытăм, çитрĕм хай çĕре—

тăпăрт! сикрĕ шух чĕре.
Пăрçа ани таврашне
вăрăм мăйсем лĕнк те ленк:
урлă-пирлĕ ÿкнĕ те,—
çемçе тÿшек çинчи пек,
йăванса çеç выртаççĕ,
лăпăс-лапăс тăваççĕ.

Пытăм эпĕ ыткăнса,
арçури пек кăшкăрса:
„Э-э, юратнă хăнамсем,
лайăх пăхрăм сире пит те:
çирĕр, ĕçрĕр, тусăмсем...
Тарăхтартăр... Çитĕ! Çитĕ!“
Тытрăм вăрăм мăйсене,—
урисенчен çăрхалатăп.
Сыхрăм çирĕм çиччĕшне.
Хăшне-пĕрне çавăнтах
хĕне-хĕне тĕп тăватăп.
Пĕр сехетре, хăвăртах,
хĕрĕх тăрна пуçтаратăп...
Çыхса хунă ушкăнне
пÿрнепе те тĕкĕнмерĕм:
чим-ха, эпĕ вĕсене
килте вĕрентетĕп, терĕм.
Тĕттĕм ампара хупам та,
мухмăр иртиччен тăхтам та,
лайăх пĕлекен пулсан,—
ятла-ятла ăс парам!
Тавăртăм-çке ак хăçан!
Ну, чун канчĕ!—тетĕп хам.

Ĕçе туса пĕтерсен,
тилхепене пĕр вĕçрен
явса тытрăм лайăхрах,
хулпуççирен çавăрсах.
Çирĕм çичĕ тăрнана
туртса тухрăм çул çине,
çирĕм çичĕ „хăнана“
сĕтĕретĕп ял енне.
Виçĕ çухрăм ытларах
туртрăм эпĕ çаксене.
Çулĕ йывăр та, çавах
сывхаратăп ял патне.
Малтанах ман тăрнасем
нимĕн сас та памарĕç,
вăрăм майлă пуçĕсем
сĕтĕрĕнсе пыратчĕç.
Укăлчана çитеспе
ӳсĕр пуççем урăлчĕç,
йăнк-янк! вичкĕн сассемпе
кăшкăрашма тытăнчĕç.
Яла çитсе кĕресси
пит инçех те ман юлмасть,
йывăр ĕçĕм пĕтесси
нумаях та шутланмасть.
Вăрăм майлă сăтăрсем—
кӳптешкеллĕ курпунсем—,
вăрттăн канаш тунă пек
(ăнман енне çав инкек!)—
тăрлинк! тăрлинк! терĕç те,
çунатсене сарчĕç те,—

пурте харăссăн хускалчĕç,
хама сĕтĕрме пуçларĕç.
Шикленмерĕм эпĕ те,
ак пуçларăм çапăçма;
ял патĕнче, тип çĕрте,
шутламастăп парăнма.
Вĕçерес мар, теейсе,
тилхепене пĕтĕр.е
çыхса лартрăм пилĕкрен,
вара вăйăм пĕтиччен,
эх, тапратрăм тĕрмешме—
ват упа пек кĕрешме!

Тăрнасемпе Тăрнаккай
турткалашрăмăр нумай.
Эх, çапатăп, турткалатăп:
пыр çурлас пек кăшкăратăп:
„Ан хăтланăр! Çук, ямастăп.
Сирĕн мăшкăл эп пулмастăп!..“
Акă тухрĕ чăн вăрçă.
Тăрнисем те чăтрĕçĕ!
Пĕрре вĕсем çĕнтереççĕ,
мана сывлăша çĕклеççĕ;
тепре эпĕ çĕнтеретĕп—
тăрнасене ўкеретĕп.
Ял пуçĕнче—сар ыраш.
Кунта халăх тыр вырать.
Пĕтĕм çывăхри тавраш
çын сассипе янăрать.
Пурте мана курнă та

кăшкăраççĕ, ахăраççĕ,
пĕр çынни те ман пата—
пулăшас, тесе пымаççĕ.
„Эй, Тăрнаккай, Тăрнаккай,
тăрнасемпе вĕçсе кай!..“

Лăш курмасăр çапăçса
вăйăм пĕтрĕ,—ĕшентерчĕç.
Тарнисем халь, урăлса,
çенсех, çĕнтерсех çитерчĕç.
Çур сехет пек тĕрмешсен
вĕсем хăвăрт çĕкленеççĕ,
пĕр сисмийĕн çĕр çинчен
мана йăтрĕç те,—силлеççĕ.
Хыт тĕрмешнĕ майĕпе,
ăсăм-пуçăм хĕрнипе—
эп туйман та—тÿпене
хам та вĕçсе кайнине.
Пĕвĕм сулланнипеле,
темле пăхрăм çĕрелле.
Шартах сикрĕм хăраса,
куç-пуç кайрĕ чалхăрса:
хăвăрт-хăвăрт варкăшса
эп пыратăп сывлăшра!
Хам хăпарнă чылаях—
ялăм юлнă ман ая...
Ялти йăмра тăррисем
çакланаççĕ урăран,
çуртсем, пахча картисем
вĕлкĕшеççĕ кусăмра.

Хамăн килĕм-çуртăма
пăхса илнĕ самантра,
курах кайрăм пахчара
арăмпа ик ачама.
Вĕсем пăхнă çÿлелле—
палламан та пулмалла,
хытă тĕлĕннипеле
хытнă-тăнă юпалла.
Аран картуса хывса
варкăштартăм виç хутчен:
„Сывпул, çемье!"—кăшкăрса
вĕçсе иртрĕм вĕсенчен.
„Атте!" тени илтĕнчĕ
хам иртсен тин, хыçалтан.
Чĕремре тем хирĕнчĕ,—
ăшăмра вут хыпнăран...
Сикес терĕм çĕрелле:
хăрушă пит,—вилмелле!
„Эх, Тăрнаккай, Тăрнаккай,
Ăсу санăн çурмаккай!"—*)
терĕм хам та эп, вара,
кăшкăрсах çак вăхăтра.

Тарăхса та аптраса,
уртăнатăп пур вăйпах;
вăрăм мăйсем, шуйхăнса,
вăркăнаççĕ хытăрах.
Кайрĕç вĕсем таçталла,
тÿртен-тÿррĕн, çÿлелле;

* Çурмаккай—çурăслă çын, айван'

варкăшатпăр малалла—
хĕвелтухăç еннелле.
Айăмра вак вăрмансем,
кукăр-макăр çырмасем,
сарă тырă пуссисем,
симĕс-кăвак хир-уйсем,
ялсем тăрса юлаççĕ,—
хĕр тĕрри пек курăнаççĕ.

Мĕн çӳлелле кайнăçем
сăркаççĕ ал-урамсем.
Аялалла пăхсанах
ăшăм сӳ-сӳ тăвать те,
шăмшак шăнма пуçлать те—
чун тухас пек çавăнтах!
Пĕтĕм пĕвĕм сăрлатса
çӳçĕм тăчĕ вирелле,
кив картусăм хывăнса
персе анчĕ çĕрелле.
Çӳлтен çӳле улăхса
кайрĕç мана çĕклесе,
кĕç татăлса анасса
пыратăп хам тек кĕтсе.
Çитрĕмĕр çӳл тӳпене.
Пăхрăм хăйса çĕр çине:
хир сăн-пичĕ кăштăн çеç
тĕтреленсе курăнать;
айра караппăл* вĕçет,

* Караппăл—хир ăмăрткайăкĕ, беркут

çумрах пĕлĕт шăвăнать...
Мамăк евĕр тап-таса
шурă, кăтра пĕлĕтре—
йăлтăр-ялтăр вылянса
çиçĕм çиçет инçетре...
„Ăçта, мĕнле çăвана
илсе кайрĕçĕ мана?!"
шухăшлатăп ăшăмра.
Сив çил кĕрлет пуçăмра.
Хам çавах та тăтăшах
тăрнасенчен пур вăйпах
лăсти-ласти! уртăнап,
ывăнтарма тăрăшап.
Тăрлинк! тăрлинк! тăрнисен
ывăнас-мĕн палли çук,
пĕлĕтпе тан пынинчен
хăрасси те вĕсен çук.
Кĕвенте пек мăйсене
тўррĕн тăсса янă та,
хуть мĕн пултăр вĕсене—
ярăнаççĕ малалла!
Шикленетĕп хам текех:
„Ўкес марччĕ тип çĕре.
Хыт çĕрте эп пăр пекех—
пăр-р! саланăп ĕмĕре.
Ўксен—ўкес шыв çине,
сарлака шыв варрине.
Шывран—путсассăн та тухăп,
чĕррĕнех, тен, тăрса юлăп".

Кĕçех куртăм—мал енче,
хура вăрман çумĕнче
Атăл шывĕ ялтăрать
Шиклĕ шухăш вылянть:
„Пурĕ-пĕрех пĕтмелле.
Ну, сикетĕп çак тĕле.
Пулĕ—иккĕрен пĕри:
вилĕп-и е чĕрĕ-и?“
Ака ĕнтĕ кĕтемĕр
çутă Атăлваррине.
Тăсăлать вăл вĕçĕмсĕр
таçта, тĕнче хĕррине...
Пĕтĕм шухăша татсах
сикмелле ман çак тĕлте,
анчах шывĕ ăшăхрах
пултăр эп ӳкес çерте!
Шутлăр халĕ, тăвансем
çӳллĕ пĕлĕт тӳпинчене
сикмелле, вĕт, тӳп-тӳр
пĕр çунатсăр, пĕр пĕччен
Çĕр çинелле пăхнипех
пĕтĕм сăсăлу вĕçсен,
сикмелле-тĕк нимсĕрех—
анкă-минкĕне ерен!
Хăраса та ĕç тухмасть,
тек кайма ман халăм çук:
ӳтĕм-пĕвĕм чăтаймасть,
алсенче тек вăйăм çук!
Хăвăрт ятăм ак салтса
çыхнă тилхепе вĕçне,

тăрна йышĕ савăнса
ярăнтарчĕ мал енне.

Хăлаçларăм ик алла та,
çăттăн хупрăм куçсене,
чăмрăм кайкăрч кайăкла ак,
йăлтăр çутă шыв çине.
Чул пек вăркăнса анатăп
çăмăл сывлăша касса;
хăлхасем çеç, хам туятăп,
шăхăраççĕ çил çапса.
„Кĕç çитетĕп, лачлататăп,
ӳт чустийĕ çеç пулатăп...“
тенĕ шухăш тatăлмасть,
Атăл та пит палăрмасть...

Ак, сасартăк çатлатса,
çитсе ӳкрĕм шыв çине.
Анлă Атăл, хумханса,
çăтрĕ илчĕ хăй тĕпне!
Чул пек хыттăн ӳкнипе
чăтаймăрĕ шыв мана,
пĕтĕм ӳтĕм-пĕвĕмпе
путрăм лартăм юшкăна.
Сивĕрех шыв чӳхенсе
хупăрларĕ тавраллах,
шăм-шакка хыт çӳçентсе
сăрхăнать вăл ăшалла.
Талпăнатăп, туртăçатăп—
ниепле те тухма çук!
Чыхăнатăп, антăхатăп,

сывлама та сывлăш çук!
Хыпашларăм таврана,—
кăшт телей те пулчĕ тем,
кĕчĕç кайрĕç аллăма
кивĕ хăмăш кĕпçисем.
Хуçрăм вăрăм кĕпçине,
хыпрăм унăн пĕр вĕçне
(тепĕр вĕçĕ шыв çинче).
сывлăш илтĕм çӳл енчен.
Ырă пулчĕ халĕ те—
ӳкнĕ-мĕн эп ăшăка;
ырă пулчĕ—ку тĕлте
йăшăк юшкăн, лăймака.
Хытă çĕре лексенех
хуçăлаччĕ ал-ура,
е пуç-хĕрлĕ ӳксенех
çурăлатчĕ пуç, ара!

Лăймакаллă путлăхра
тапаланнă самантра
пырса тулчĕç ман çине
темле выçă пулăсем,
ним тума çук çаксене,
сĕкĕнеççĕ тек вĕсем!
Ак, сиcетĕп, пысăк пулă,
хам чухлех те пулмалла,
ишсе пычĕ йывăр чуллăн—
çаврăнать ман тавралла.
Вăл, паллашнă пек, малтан
тĕккелерĕ мана мирлĕн;

палласассăн, çамкаран
таклаттарчĕ пĕрре вирлĕн.
Пуçăм кайрĕ янтраса,
пĕвĕм кайрĕ суланса.
Юшкăнра тăман пулсан,
эп ўкеттĕм ураран.

Пысăк пулă шалт антратрĕ:
карчĕ шăллă çăварне,
хыттăн кышлама пуçларĕ
лач исленнĕ пуç тирне.
Хăвăрт, çакă вăхăтра,
шухăш çиçрĕ ман пуçра:
„Чим-ха, ку шуйттан мана
çăлăнма та май парать.
Мĕн çывратăп, тăмана!?
Ак телей-çке—хăй шырать!“
Çĕнĕ ĕмĕте чĕртсе
пухрăм пĕтĕм вăй-хала,
майлă вăхăта кĕтсе
тăсса ятăм ик алла.
Сĕмсĕр пулă халь мана
катертесшĕн алсенчен...
Ятăм илтĕм эп ăна
аллапки пек сулинчен.
Малтан тытрăм пĕрине,
унтан тытрăм—теприне!
Хыттăн çапрĕ урнă пулă—
пуçĕпе те хўрипе,

вĕçернесшĕн—пуçăм урлă
йăмпăрт! чăмре чăмăш* пек.

Çăттăн тытнă аллăмсем
вĕçермерĕçĕ пулла,
унăн шăртлă сулисем
йĕп пек тăрăнчĕç алла.
Сехĕрленнĕ шухă пулă
вăльтăр-вальтăр аванса,
ак татах та тарăхуллăн
илчĕ вирлĕн талпăнса,
илчĕ вирлĕн талпăнса та—
эпĕ тухрăм путлăхран;
сиксе тухрăм путлăхран та—
пулла ятăм аллăмран.
Пулă ярăнса тарсан,
эп çĕклентĕм, шыв çине;
ишрĕм, ишрĕм те—аран
çитрĕм шурлăх хĕррине.
Эпĕ çитнĕ вырăнтан
тип çыран та инçе мар,
ющкăн-хăйăр хывнăран,
кунта шывĕ тарăн мар...

Тухрăм Атăл çыранне,
хăйăр тĕмески çине.
Выртрăм кунта чылайччен
йывăр шухăш пуснă май.
Шухăшларăм хам çинчен,
шухăшларăм пит нумай.

* Чăмăш—чăмса вĕçекен шыв кайăкĕ

„...Тăрнаккай, эх Тăрнаккай,
чăн та эсĕ çурмаккай!
—Мĕн курмарăм, тамаша!
Çын кулли-çке, ял кулли!
Ĕмĕр çын курман нуша
тупрăм таçтан хам валли.
Мĕн тесе-ши тăрмашатăп
тĕпсĕр, çăмăл ăспала?
Мĕншĕн, мĕншĕн-ха пымастăп
халăх пынă çулпала?..
Пĕр ĕçре те тўсем çук ман;
çăмăла çеç пăхнăран—
пĕр ĕçе те хăнăхман.
Нихăш ĕç те ман ăнмарĕ,
ыррăн пурăнса пулмарĕ.
Акă ĕнтĕ халь тата
тытăнсаттăм çĕр ĕçне.
Килсе çитрĕм ак ăçта?
Пĕлĕтрен те—шыв тĕпне!
Пĕтĕм пурăнăç манăн вртрĕ
тĕлсĕр, йĕрсĕр тăрмашса,
Халь чикке ак вĕçсе çитрĕм—
лачакаллă тавраша!“

Шухăшларăм эп нумай
тăнăм-пуçăм каймă май,
шухăшларăм пĕрехмай
çул çинче те, утнă май.
Кил инçе ман: çулпала
виççĕр çухрăм утмалла.

Ерипен çеç утнăран,
яла çитрĕм уйăхран.

Каламастăп эп сире
ялăм-йышăм кулнине,
анчах хамăн чĕремре
манаймастăп иртнине.
Те айван эп, çурмаккай?
Те тўрккес, те çăмăлттай?
Те панккав эп, те наян?
Ăса кĕрĕп-ши хăçан?
Ахаль мар пуль—Тăрнаккай,
теççĕ мана пĕрехмай...
Юмаххăма маниччен
сўтсе явăр ман çинчен.

## ÇĔВĔÇ ИВАН

1.

Çĕвĕç Иван ачаллах
тăрса юлнă тăлăха,
çавăнпа та курмаллах—
курнă, тўснĕ хурлăха.
Саккăрта вăл, пĕр пĕччен
юлса, куçнă çын патне.
Вун-вуникĕ çулсемччен
кĕтнĕ сурăх кĕтўне.
Вунтăваттă тултарсан—
хаваслаинă çĕн ĕçе,
тăрăшсах та пур вăйран
вăл вĕреннĕ çĕвĕçе.
Вată çĕвĕç, чĕмсĕрскер,
пулнă шăрчăк та хаяр;
Ивана вăл, усалскер,
хĕсĕрленĕ сахал мар.
Ўсĕр çĕвĕç пусмăрне
тек тўсме ун хал çитмен,
хăй юратнă çĕв ĕçне
вĕренмешкĕн май килмен.
Шăп вунçиччĕ тултарсан,
тарнă çĕвĕç патĕнчен.
Çакăн хыççăн çак Иван
пĕр ĕçпе те килĕшмен.

„Мĕнле юсам пурăнăça?
Хăçан пулам хам хуçа?" —
тенĕ Иван час-часах.
Анчах пурăнăç — çав-çавах.
Пĕрре çакскер хăйне хăй:
„Чим-ха, чим-ха, малалла
çĕвĕç çеç ман пулмалла!
Кирлĕ те мар нимĕн вăй.
Виçĕ çул-çке мучейпе
эп çӳренĕ ку ĕçпе.
Мĕн кунта пит хăрасси?
Пĕр хăюллăх тупасси!" —
терĕ хăвăрт савăнса.
„Анчах... ялта юрамасть:
паллакан çын йышăнмасть"
тет вăл пуçне сулласа,
ĕнсине кăшт хыçайса.
Чăн та йĕкĕт сывăрмарĕ,
шикленмерĕ, тытăнмарĕ.
Çив хĕлре, пĕр лăпкă кун,
хавасланнă çамрăк чун —
хачă, аршăн хĕстерет,
пасаралла вĕçтерет.

Çитрĕ, кĕчĕ пасара,
куçĕ-пуçĕ шарнипе —
тăчĕ, пăхрĕ хăй тавра.
Курчĕ халăх хушшипе:
пĕр усламçă суттăвать,
кутăн-пуçăн калаçать;

йыхӑрать вӑл ҫынсене,
мухтать, сӗнет таварне.
Ак усламҫӑ, ҫуйхӑшса,
пӗр ҫураҫнӑ хӗр валли
пачӗ тумтирлӗх касса.
Сарӑ хӗрӗ—куҫ туллин
тӑрать шӑппӑн та япшар,
хӑй каччипе юнашар.
Унӑн ашшӗ—пӗчӗк ҫын,
калӑн, темле пысӑк чин,
хӑйне мӑннӑн тыткалать,
пуҫсем урлӑ пӑхкалать.
Мӗн кирлине туянсан,
лавка умӗнчен хӑпсан,
пӑхрӗ хай ҫын таврана—
курах кайрӗ Ивана.
„Пӑх-ха, кӗрӳ пуласси,
паллӑ ӗнтӗ ӑнасси:
ҫӗвӗҫ ҫук пуль, теттӗмӗр,
акӑ тӗлнех лекрӗмӗр!
Авӑ тӑрать яштӑм яш,—
тытнӑ хачӑ... пыр, паллаш.
Чӗнес ӑна хамӑрпа,"—
терӗ ҫак ҫын кӑмӑлпа.

Ырӑ каччӑ кӑшт утса,
халӑх урлӑ кармашса
пӑхрӗ, пӑхрӗ,—инҫетрен,
ыйтрӗ ҫӗнӗ ҫӗвӗҫрен:
—Калаччӗ-ха, ман пӗлес...

тепле, çĕвĕç мар пуль эс?
Иван, ăшра хумханса,
каччă çине тинкерет,
хăй те туймасть, хыпăнса:
„Çĕвĕç эпĕ.. Çĕвĕç,—тет.
Каччă пычĕ патарах,
кала пуçлать хыттăнрах:
—Эпир—Тукас ялĕсем.
Çĕвĕç кирлĕччĕ пире:
çĕлетмелле тумтирсем.
Халь эс пымăн-ши пĕрле?“
Иван, паллах, килĕшет,
ют çынсемпе пĕрлешет.
Вĕсем туслăн пуплешсе
утса тухрĕç ушкăнран,
çуна çине тиенсе
тухса кайрĕç пасартан.

Ямшăк—кĕрӳ лашана
çил пек ярса чуптарать;
çулĕ майĕн, ăшăнма,
хупах* умне чарăнать.
Хупахĕнче туллиех
ӳсĕр халăх сĕрлешет,
алăкĕнчен кĕрсенех
эрех шăрши—нӳ! перет.
Пирĕн çĕвĕç, ыр хăна,
чи хисеплĕ вырăнта;
ĕç-çи ĕнтĕ халь ăна,—

*Хупах—ĕçмелли çурт.

пурте янтă-мĕн кунта!
Ĕçрĕç-çирĕç чылаях—
сулкаланма пуçличчен,
каçхи тĕттĕмле анчах
тухса кайрĕç ĕçкĕрен.
Çĕвĕç Иван улпутла
кисренкеле çеç пырать,
лав тĕпĕнче айванла
юрлать, мамлать, çуйăхать.
Пулас кĕрӳ ямшăкра
—Хап! хап! тесе кăшкăрать,
тулли лава самантра
килне çитсе тăратать.

2.

Тепĕр кунне, ир çинче,
çураçнă хĕр килĕнче.
Пурте тăнă ыйхăран,
Иван—пуринчен малтан.
Ак вăл хаччине илет,
ларать сĕтел хушшине,
пустав тĕркине сӳтет,
сарать ăна сак çине;
кăнтаркалать аршăнпа,
çыркалать тек пурăпа;
арăм пулас сар хĕре
чĕнсе илсе виçкелет,
лăпкă, ăшă пӳлĕмре
шăхăркалать, ӳсĕрет.

Кăнтăрла та çитрĕ—иртрĕ.
Тумтирлĕхе çĕн çĕвĕç
мĕн касченех вицрĕ, вицрĕ,—
касаймасть-ха... Тĕлĕнчĕç.
Тепĕр кунне тин хайхи
пустава çын паллайми
касрĕ, касрĕ те пĕтерчĕ,
йăлтах вакласа çитерчĕ.
Пĕр кун иртет, иккĕ те—
çĕн çĕвĕçĕн ĕç пĕтмест,
ўссех пырать шикĕ те—
тек хăйне вăл ĕненмест.
Шутлать, шутлать хĕрĕнсе,
пур вăйран вăл тăрăшать,
çан-çурăмĕ пĕçерсе
çамки çине тар тухать.
Çĕлет, сўтет, тертленет,
хуçкаланать, хирĕнет.
Çук, çавах ун ĕç тухмасть:
хакăпа хак майланмасть!

Качча каяс сарă хĕр
канăç памасть Ивана,
йĕрет, вăрçать тем те пĕр:
—Çĕвĕç мар эс, тăмана!
пăсрăн ырă тавара...
Атте, атте, ну мĕскер
карса тăран çăвара?
Ятла ăна эс, хĕстер!—
хистет хĕрĕ ашшĕне.

Иван хыҫать ĕнсине.
Тумтирлĕхе пăснине
хуҫа курать—тулашать,
чăмăртать вăл чышкине—
хĕнеп! тесе хăратать.

Иртрĕ виҫĕ кун. Аран
сĕвĕ пĕтрĕ темелле.
Тумтир хатĕр. Тăхăнсан,
пурте кулсах ӳкмелле!
Ҫĕн халатăн пĕрмечи
айăк ҫине пăрăнать,
аркă вĕҫĕн пĕр хĕрри
ура тупаннех анать...
Ĕҫ тухмарĕ—мĕн тăвас?
Халĕ ĕнтĕ мĕн курас?..
Тухса тарас—майĕ ҫук:
хуҫи унтах—ярас ҫук!
Пуласчĕ ун халь укҫи—
тӳлетчĕ вăл хăйĕнчен...
Анчах та ҫук!.. Кил хуҫи
чĕнсе пычĕ кĕрӳшне.
Мĕн-ха тейĕн? Ҫĕвĕҫе
тытрĕҫ иккĕн ик енчен,
кăшкăрашса, хирĕҫсе
паркаларĕҫ ĕнсерен.
Вара, темшĕн, ҫĕр каҫма
хупса лартрĕҫ мунчана;
кунта, шанчăклă пулма,
ҫăраларĕҫ алăка.

Ларать Иван мунчара.
Каç пулнипе—пӑч тӗттӗм.
Мӗнле пулчӗ ку, ара?
Кӗтмен çӗртен-çке пӗтӗм!
Анчах мунчи ӑшӑ-ха,
тин çеç хутса кӗнӗскер.
Çавах унта хуйхӑпа
пӗччен ларма пит тискер.
Çамрӑк çӗвӗç вӗчӗхсе
пӗр кӗтессе вырнаçать;
темӗн пуласса кӗтсе
пуçне усса шухӑшлать.
Ак сасартӑк вӑл илтет:
ӑна хирӗç кӗтесре
темскер хуллен мӗкӗрет...
Ах, тискер ку тӗттӗмре!
Иван тӑчӗ тӑнласа,
сывлама та пӑрахса
вӑл итлерӗ лайӑххрах.
Акӑ татах! Ак татах!..
Кӑптӑрт-кӑптӑрт! илтӗнет,
çӗрӗк урай чӗтренет...
Иван, сӑсӑл вӗçнипе,
сикрӗ тӑчӗ сак çине...
Кӑптӑртатнӑ сас хуллен
ун патнех ак çывхарать.
Иван алӑк патӗнчен
тепӗр енне шӑвӑнать.
Анчах, хӑвӑрт чакнӑ май,
Кӗрет ӳкет чул çине...

—Пётрём, пётрём... ай-яй-яй!—
жарса ячё çаварне.
„Те этем ку, те шуйттан,
ман çинех-çке тапăнать!
Хупрĕç пĕтмех-çав, тăшман!“—
тет хăравçă, пăшăхать.
Чим-ха, тăчĕ тимĕр-шăл,—
таçта, патах килчĕ вăл.

Хăйрĕ Иван, темĕнле.
„Пурпĕр вилĕм ман“ тесе,
хĕрнĕ аллисемпеле
пĕр чул катăкĕ илсе,
итлет каллех сас енне.
Ак каллех хай нĕрĕх сас
кĕрсе кайрĕ хăлхине.
„Ах, ăçта-ши лăпчăнас?!“
Тепĕр самант. Хай киске—
тăк!—тĕкĕнчĕ айăкран;
хыпашлать вăл, çемçескер,
чĕркуççирен, урăран!..
Сехĕрленнĕ туйăмпа
печĕ Иван хай чулпа.
Тĕл лекterчĕ. Çак усал
кĕмсĕрт! ўкрĕ мĕкĕрсе.
Ну, халь ĕнтĕ—урăх хал!
Тăрать Иван итлесе.
Хыттăн, хăвăрт ўкнĕскер,
сас памарĕ нимĕскер.
Иван шăппăн хыпашлать.

Алла кӗҫӗ... Ним те мар,—
вилнӗ пӑру ҫеҫ выртать.
„Эх, каллех ак типӗ шар!..
Хуҫа ӗнтӗ хуҫкалать.
Пӗтрӗм! пӗтрем! Эх айван!..
Ҫӗвӗҫ пултӑм!“ тет Иван.

Йӑлт аптӑранӑ ҫамрӑк пуҫ
сикрӗ лапка тӑррине.
Теттӗм. Курмасть каҫхи куҫ.
Шутлать мӗн тумаллине.
Сывлӑш пӳлӗннӗ этем—
шухӑшларӗ тем те тем...
Тӑчӗ, хирчӗ маччана—
вӑл хускалчӗ. Вӑйпала
йӑтса уҫрӗ хӑмана...
Тухрӗ... сикрӗ—уялла.

3.

Чупса, чупса хай Иван
ҫитсе кӗчӗ пӗр яла.
„Хӑвмаҫҫӗ-ши хыҫалтан?“
Пӑхкалать вӑл каялла.
Тулта ытла сивӗрен—
Иван хӑваттер шырать,
анчах, вӑхӑт ҫӗрлерен,
пӗтӗм ялӗ ҫывӑрать.
Тенеплерен пӗр пӳртре
хӑйӑ ҫутти курчӗ вӑл,
ку ҫутти те тӗттӗмре
аран ҫиҫет—чӑл-чӑл-чӑл.

Çĕвĕç, çак çутта пырса,
тăра-тăра кăшт шаккать,
пÿртрен пĕр карчăк пăхса:
—Кам эс?—тесе кăшкăрать.
„Эпĕ те-ха... çулçÿрен...
Ырă çынсем пулмăр-ши?"
Мана хваттер ямăр-ши?—
терĕ Иван ерипен.
—Çук çав, яма юрамасть;
старик вилес пек выртать,—
терĕ хирĕç вата сас.
„Калăр: ăçта ăшăнас?
Пĕтĕм ял, вĕт, çывăрать,
ниçта çутă курăнмасть.
Çулçÿрене йышăнсан,
сăвап пулĕ турăран.
Ырă пулăр!" тет Иван.
—Эх куршанăк! Мĕнле çын?!.
Шăнтăн пулсан... кĕр эппин—
терĕ карчăк тарăхса,
мăкăр-мăкăр ятлаçса.
Çĕвĕç кĕчĕ—ăшăнать,
шăкăр шăкăр калаçать.

Салтăнма та ĕлкĕрменччĕ,
карчăк ăна ĕç хушать:
—Çамрăк çыннăм, итлесемччĕ,
пирĕн ашшĕ пит аптăрать.
Кайччĕ эсĕ ял вĕçне,
паллă юмăçă патне.

Чи хĕрриччи кив çуртра
юмăç-карчăк пурăнать.
Маншăн хуть хăш вăхăтра
килме хапăл вăл пулать.
Кала: Мархви ячĕ, те.
Старикĕ пит йывăр, те.
Юмăçĕ кăшт уксахрах.
Хăйне йăтма каласан,
йăтсах эс кил,васкарах.
Сан вăй пур-ха, пултаран...

Иван тупрĕ юмăçа.
Вăрçсан-вăрçсан, чылайран,
юмăç, кăмăлне уçса,
тухрĕ килĕнчен аран.
Урамалла тухрĕç çех—
карчăк хăйне йăттарать.
Иван ăна, михĕ пек,
çурăм çинелле хурать.
Вара тĕттĕм урампа
утрĕ хăвăрт утăмпа.
Юмăç карчăк, самăрскер,
час пусарчĕ Ивана;
шăлтах ырса çитнĕскер,
вăл шутларĕ кăшт канма.
Асăрхарĕ—пĕр енче
ларать хулăм тунката,
„Кайса канам ун çинче"
тесе Иван çакăнта
пычĕ, лартрĕ юмăça.

Çавăрăнма та ĕлкĕрмерĕ,
карчăк ячĕ кăшкăрса.
Ырнă йĕкĕт ним пĕлмерĕ,
калла пăхрĕ—карчăк çук!
Ăнланма та майĕ çук.
Таçта, тĕттĕм шăтăкра вăл
кĕмсĕртетрĕ, шăмпăртатрĕ.
Иван хăвăрт, хăпăл-хапăл
хыпашларĕ—ним тупмарĕ.
Тин пĕлет вăл: каска мар,
Пус пури ку, хăвăлскер...
Çăл пури-мĕн... Эх, тип шар!
Каллех пĕтрĕм! Ну, мĕскер?!
Хыçран сикес-тухас çук.
Хытса кайса тăма çук.
Юмăç пĕтрĕ!.. Тармалла!
Вĕçет Иван уялла...

Ыткăнать вăл мăн çулпа,
пăхкалать тек каялла.
„Кĕç хăвалĕç лашапа...
Пуçа ăçта хумалла?“
шухăшлать вăл ăшĕнче.
Ак курать—хăй хыçĕнчен
пĕр лав вĕçтерсе пырать.
Çӳç-пуç вирелле тăрать.
Курать—умра пĕр арман,
çил-арманĕ—кив арман.
Иван, карсак* пек чупса,

* Карсак—хир мулкачи (русак).

чăмать çак çил арманне,
хыпăнвипе васкаса
кĕрсе ларать пĕрнене.
Çуна çитсе чарăнать.
Алăк хуллен уçăлать.
„Петрĕ маншăн сута кун!“ -
терĕ çĕвĕç, мĕскĕн чун.

Кĕчĕç шăппăн виçĕ çын—
виçĕ çăмламас арçын;
тăчĕç çуммăн, юнашар,
çутрĕç пĕчĕкçĕ хунар.
—Шăп çакăнта, çак тĕлте,
тăмпа хытарнă çĕрте...
Ил кĕреçе. Чакалар.
Тăпри унта хулăм мар,—
терĕ пысăк сухалли
(арман хуçи пулмалла),
пăхкалать хăй тавралла.
Кунта кашни япали
уншăн паллă тăмалла...
Чаврĕç, чаврĕç çак çынсем
пĕр кĕтесри шăн çĕре,
хирчĕç пешнепе вĕсем
алăк евĕр тимĕре,—
уçрĕç вăрттăн нӳхрепе.
Унтан туртрĕç те кăларчĕç
тулли пысăк михĕпе
шăнкăр кĕмĕл. Ăна сарчĕç
çил арманĕн урайне.

Кунта тĕрлĕ укçа-тенкĕ.
Анчах пуринчен ытла
таçтан çаратса çитерне—
хушпу, шĕлкеме, тухъя...

Çăткăн вăрă-хурахсем
çакă мула пикенсе
тытăнаççĕ пайлама,
пайлама та тавлашма.
Çакăнтах пĕр хаярри
çупрĕ ячĕ юлташне,
лешĕ кăшкăрчĕ—шари!
хирĕç пачĕ хайхине.
Тухрĕ кайрĕ харкашу,
харкашу та çапаçу.
Пирĕн Иван пĕрнерен
шăппăн пăхса ларнăскер,
ик-виç саслăн, тĕрлĕрен,
хыттăн кăшкăрчĕ тискер:
—Сантăр, Павăл, ак вĕсем!
—Тытăр, çыхăр! Вăрăсем!..
Пит сасартăк çĕкленсе
тапăртатнă майĕпе,
хăма-пĕрне вĕçерĕнсе
персе анчĕ урайне.
Хыттăн тăрăнса янтратрĕ
пысăк, тăваткал пĕрне,
кăшт пусса çеç лапчăтмарĕ
вăл çĕрти хурахсене.
—Тытăр!!!—кăшкăрчĕ Иван,

пĕрне çинчен ялт! сиксе,
виçĕ вăрă—виç çăхан—
тухрĕç тарчĕç вирхĕнсе.
Тарчĕç вĕсем хăраса,
мĕнпур мулне хăварсах.
Иван хăвăрт чупкалать,
кĕмĕл-пăхар таврашне
пысăк миххе тултарать,
тултарать те—кил енне.

4

Утать Иван васкаса
măн çул тăрăх, хашкаса.
Кайсан, кайсан аякран
сассем илтет—хыçалтан.
Çынсем хыттăн калаçни,
лаша ури чаклатни
çывăхарать ял енчен,
тӳрех Иван хыçĕнчен.
„Кусем хайхи вăрăсем
хăвалаççĕ-мĕн мана.
Ну, ĕнтеççĕ халь вĕсем!
Укçу-мулу—çăвана!"
тесе Иван, миххине
чавса хучĕ юр айне.
Курать вăл—çул хĕрринчех
ларать лутра, ват юман.
Ахаль çĕрте шиклĕрех,
çавăнпа та ак Иван
юман çине улăхать.
Хыçран килекен çынсем

çитрĕç ват юман тĕлне.
Виç çунапа мĕн вĕсем.
Калаçни йăлт илтĕнет.
Пĕри калать:—Мăн-пичче,
сĕм вăрмана çитиех
çирĕм çухрăм кайиччен,
ак вуталăх, çул çинчех.
Касар çакă юмана.
Виç лава вăл кĕрес çук;
тирпейлетпĕр халь ăна,
йыт-качка та курман чух.
—Касар.. Касар...Чарăнăр!
Пупшăн пулсан—пурĕпĕр.
Пит вăрçсассăн, суйăпăр:
вăрман вутти, тейĕпĕр.
Канаш татнă хыççăнах,
висĕ лавçа хавартах
пычĕç çак юман патне,
тытрĕç пысăк пăчкине.
Çивĕч пăчкă чашлатса
кышла пуçлать юмана,
селĕм пуртă шаклатса
касать пĕр енчен ăна.
Пĕлчĕ çĕвĕçĕ Иван:
ку ўркенчĕк арçынсем
çывăрхи Мăн-саларан,—
паллă пупăн тарçисем.

Шăппăн ларакан Иван
сасă хушрĕ ерипен:

„Касăр, касăр. Ман юман—
ӳкĕнтерĕ ӳлĕмрен“.
Шартах сикнĕ арçынсем,
тăчĕç юпа пек хытса.
Ăнланмарĕç-ха вĕсем,
пăхкалаççĕ шăп тăрса.
Кулса илчĕ кăшт Иван,
хушрĕ хыттăн кăшкăрсах:
„Касăр, касăр. Ман юман
асăнтарĕ-ха хытах!“
Сехри хăпнă арçынсем
пăхрĕç йывăç тăррине:
Шуйттан! терĕç те вĕсем,
сикрĕç лавĕсем патне.
Кулчĕ лăхлатсах Иван.
Курăнмасть хăй тĕттĕмре.
„Ха-ха-ха-ха!.. Эп шуйттан?!
Чим, ан тарăр. Эп сире
Кăтартам леш тĕнчене!“
Чалт! сикет вăл çĕр çине.
Кăшт çеç курчĕ: хайхисем,
сехĕрленнĕ этемсем,
ик лав çине ларнă та,
пĕр лашине хăварсах,
пуртти-пăчкине тăксах,
вĕçтереççĕ каялла.

„Ку юрать-ха вăхăта,
хам аптăранă яхăнта“
терĕ Иван сасăпах;
тытрĕ лава хăвартрах,

хучĕ укçа миххине,
ларчĕ хăй те ун çине,
илчĕ алла чăпăркка,
хăваларĕ лашана.
Лаши—ватă, улайкка,
итлемест-мĕн Ивана.
Тул çутăлса кайиччен
килне çитесчĕ тесе,
çапрĕ, çапрĕ хистесе
ват лашана хыçĕнчен.
Çук, чупмасть вăл, итлемест,
хĕрине çеç çавăрать.
Çĕвĕç Иван тўсеймаст,
ятлаçать тек, кăшкăрать:
„Эх, чуман ку! Çавăнпа
тăрса юлнă ман алла...
Мĕншĕн сĕлĕ-утăпа
тăрантарнă усрала?!.
Мĕн тесе-ши муллă пуп
тытнă путсĕр услапа?
Эй, айта ну, чуп-ха, чуп!“
вăрçнă Иван тарăхпа.
Лакăм, сулнăк çулпала
тăвайккинчен аннă чух
(çапкалашнă майпала
вăл туйман та нимĕн чул,)
ун лашийĕ, улайкка,
анчĕ кайрĕ çырмана;
кив çунийĕ, лачăркка,
сирпĕнтерчĕ Ивана.

Юр тултарнӑ ҫырмаран
хӑпармашкӑн пикенсе,
Ҫӗвӗҫ Иван тем таран
тармакланчӗ тӗрмешсе.
Тарӑн, кӑпӑш кӗрт ҫинче
лаши путрӗ курӑнми,
сикрӗ вӑйӗ пӗтиччен—
шатӑрт! хуҫӑлчӗ турти.
Тӗттӗм каҫ ҫав, кун пек чух
лӑпкӑ ҫын та аптӑратех.
Иванӑн та тӳсӗм ҫук,
урса ҫитрӗ вӑл питех.
Супнӑ Иван чӑтаймасть:
путса ларнӑ лашана
шӑлтӑр-шалтӑр тӑварать,
таврать те вӑл ӑна—
ҫырмаран та кӑларать.
Лӑчӑр-лачӑр ҫунине
ҫапрӗ,—хучӗ салатса,
хӑмӑтне те кутлӑхне
хыврӗ—ячӗ ывӑтса;
ҫакрӗ укҫа миххине,
хӑй вӑл ларчӗ утланса.
Тул ҫутӑлнӑ самантра
тухрӗ такӑр ҫул ҫине,
кӑнтӑр ҫитнӗ вӑхӑтра
пырса кӗчӗ хӑй ялне.

Пырать Иван урампа
ула лаша ҫийӗнче'

лаши ăслă, çавăнпа
итлемест ют аллинче.
Чăхăмскер вăл, улайкка,
çапмасассăн—тапранмасть,
кăшт лексессĕн чăпăркка—
тапăçмасăр чăтаймасть.
Кашни çапнă хыççăнах
иккĕ тапать каялла,
унтан вара аранах
виççĕ сикет малалла.
Пысăк урам туллиех
халăхпала хĕвĕшет,
кам тĕл пулнă—тĕлĕнсех
Иван çине шăл йĕрет.
Ачи-пăчи ал çупса
шăхăрать те ахăрать,
Иван хыçĕнчен чупса
йĕкĕлтет те кăшкăрать.
Çĕвĕç Иван именмерĕ,
нимскере те итлемерĕ.
Çитрĕ, кĕчĕ хăй килне,
утă пачĕ лашине.

Хайхи-майхи васкасах,
питĕрет те хапхана,
пÿрте кĕрсе ларсанах
шутла пуçлать укçана.
Йывăр миххине салтса,
унти пур пек пурлăха
хучĕ урайне сарса.

Сирчĕ Иван хурлăха...
Мĕн-мĕн çук-ши çакăнта?
Шутлама та çук ăна:
ылттăн-пăхăр укçасем,
шăнкăр кĕмĕл хуппусем,
çут мерченлĕ тухъясем,
кив талерлă маясем...
Шӳлкеми те, тем те пур.
Акă ĕнтĕ пăх та—кур!
„Ăçтан, хăçан, мĕн майпа
çăткăн вăрă-хурахсем
пухса хунă ку мула?!.
Кама макăртман вĕсем?!.
Çук, çук, кăна шутласа
пуç тăнне те çавăрас мар,
çын куççулĕпе пуйса—
таса чуна çĕртес мар.
Тасалас ку çылăхран!"—
шухăшларĕ яш Иван.
Шухăшларĕ те унтах
вăл пуçтарчĕ мĕн пурне,
йывăр миххе хăвăртрах
персе ячĕ сакайне.

5

Турĕ Иван тĕрлĕ шут.
Ак пасара вăл çитет.
Ула утлă юланут
урлă-пирлĕ сиктерет.
Вăрăм туя тăрринче

кив çĕлĕкне çавăрса,
кĕчĕ халăх хушшине—
арçури пек кăшкăрса.
Мыскараçă сын çине
халăх пăхать тĕлĕнсе,
шарт! çапаççĕ алсене,
ахăраççĕ ӳпĕнсе.
„Ват мучейсем! пиччесем!
Кинемейсем! инкесем!—
Итлĕр, лайăх тăнласа:
кама вăрă-хурахсем
шар кăтартнă çаратса,—
пурте итлĕр, ыр сынсем:
Кĕмĕл Чĕлĕм-кассинчи
Карăк Кавăрле ачи,
Çĕвĕç Иван тенĕскер
(эп хамах вăл, чип-чипер!),
тупнă çав хурахсене—
тытса илнĕ пур мулне...
Кам çухатнă шӳлкеме,
хушпу, тухъя таврашне—
çавна палласа илме
пырăр Чĕлĕм-кассине..."

Çĕвĕç Иван кăшкăрса
пĕрре, иккĕ çаврăнать,
пĕтĕм халăх шăп пулса,
ăна итлесе тăрать.
Тепĕр хут çак çаврăнса
пасар витĕр тухнă чух,

халăх кайрĕ хумханса—
тавçăрса та илме çук!
—Тытăр, тытăр ку çынна!
Хăй вăл вăрă, хăй—хурах!
Туртса илĕр лашана:
пуп лаши вăл.. пупăннах!—
илтĕнеççĕ сасăсем.
Иван ăса кĕриччен
Сала пупĕн тарçисем
тухрĕç халăх хушшинчен.
Чупрĕç пычĕç, Ивана
туртса илчĕç ут çинчен,
калаçма та çук ăна—
лектереççĕ пур енчен...
Çавăнтах, çак ушкăнра,
тухса кайрĕ тавлашу;
хыт шавлаççĕ, таврара—
çуйхашу та харкашу.
„Хăй вăл—вăрă... Çав йышши!"
кăшкăраççĕ пĕрисем.
—Çук, вăл—тĕрĕслĕх тĕшши!—
тавăраççĕ теприсем,—
Вăрă пулсан, çакăн пек
ырă ĕçе вăл тумасть;
çын хуйхийĕ—йўç инкек
вăрă чунне хускатмасть,—
теççĕ хăшĕ-пĕрисем.
„Мĕншĕн тата вăл апла
вăрланă пуп лашиче?.."
—Тен вăл тупнă-тăр ăна?

Вăл тытнă пуль вăррине...
Ан тивĕр-ха пĕличчен!
Ыйтăр, тĕпчĕр хăйĕнчен. —
Тĕрлĕ сасă, шăв та шав;
ӳссе сарăлчĕ йăслав.
Пăхкалаççĕ: ăçта Иван?!.
Калаçасшăн унпала.
Анчах Иван ушкăнран
тухса шунă таçталла..
Чăхăм лаша, улайкка,
пуп тарçийĕ утлансан,
кĕтсе тăман чăпăркка—
юртнă, кайнă пит аван.

Каç пулсан тин, тĕттĕмле,
çитрĕ Иван хăй килне.
Çикелерĕ типĕлле,
канма выртрĕ сак çине.
Тĕрлĕ шухăш пуснăскер,
куç хупма та ĕлкĕрменччĕ.
Кĕç илтет вăл—темĕнскер
кантăка кăшт кисрентерчĕ.
Пăхрĕ, тулта, тĕттĕмре
ним мĕлки те курăнмасть.
Ах, анчах та чĕрере
шиклĕх тухрĕ—лăпланмасть.
Кĕçех шак-шак! шаккани
илтĕнчĕ халь пăлтăртан.
Сисĕнмерĕ хускални—
тухрĕ йăпшăнса Иван.

"Кам вăл?.. Кaç пулсан, çĕрле,
кансĕрлетĕр çӳресе?
Мĕншĕн кантăр çуттилле
калаçмастăр-ши килсе?"
—„Хамăр ял эп—Левенти.
Ерçеймерĕм кантăрла.
Эх, эс, шуйттан кĕвенти,
пит хăравçă пулмалла.
Уç-ха, уç часрах! Мĕскер,
каймалла-им, килнĕскер?!
„Çук, кĕртместĕп халĕ тин.
Кил ыран эс, ирпеле."
—Ах.. кĕртместĕнех, эппин?
Ну, хăравçă эс епле!"
Пĕлчĕ Иван сасăран:
ку—Левенти сасси мар.
Асăрхать вăл—çак çăхан
килнĕ кунта пĕччен мар.

Мĕн те пулин пуласран,
хĕсĕк, тĕттĕм пăлтăрта
хыпашларĕ хай Иван
йывăр, тимĕр япала.
Тупаймарĕ вăл нимскер.
Ун тупма та май пулмарĕ,—
пит сасартăк та тискер
кивĕ алăк шатăртатрĕ.
Тӳнсе кайнă алăкран
кĕрсе кайрĕç виççĕн тан,
Паллах, хайхи вăрăсем—

арманти мул хуçисем!
Тытрĕç вĕсем Ивана,
пÿрте кĕртрĕçĕ туртса.
—Шăп пул!—терĕçĕ ăна,
вăрăм çĕçĕ кăтартса.
Пĕчĕк лампă çунинче
Иван курчĕ—вăрăсен
виçĕшин те алсенче
вичкĕн çĕçĕ е кистен.
—Эсĕ-и вăл, упăте,
пĕр каç, çил-арманĕнчен,
илсе тарнă çурçĕрте
пирĕн мула нÿхрепрен?
Ху пĕччен-и ун чухне
е юлташ та пулнă сан?..
Тавай укçа миххине!
Вĕлеретпĕр, памасан!—
çиллĕн кăшкăрчĕç çаксем—
усал вăрă хурахсем.

Иван тăчĕ хирĕçме,
тăчĕ пĕлмене пеме:
„Мĕнтен шутлатăр эсир—
эпĕ илнĕ пуль, тесе?
Вăрă ĕçне тура сир!..
Эпĕ ăçтан пĕлейсе
пырса кĕрĕп сĕм çĕрле
эсир мул хунă тĕле?“
—Мĕн тунма эс хăтланатăн?
Паян ху, вĕт, пасарта

пырна çурсах кашкăраттăн!..
Анчах, шăвантăн тасга.
Пирĕн алла çавăнтах
çакланаттăнччĕ кăштах,—
терĕç хурахсем хĕрсе,
Иван çине тирĕнсе.
—Кала: ăçта чиксе хутăн
пирĕн тивĕçлĕ мула?..
Асту, ан калаç эс кутăн,
ху айванлăхна пула!
Эпир ăна хĕнлĕхпе,
пур хăрушлăх-шиклĕхпе
măн çул çинчен, ялсенчен
пухнă виçĕ уйăхчен,—
терĕ хыттăн пĕр хурахĕ,
тытрĕ Ивана майран.
Нăчăртатрĕ ун янахĕ,
сăмах хушрĕ вăл аран:
“Мулар, миххĕр—аялта,
çĕрте, тĕпсакайĕнче...“
—Кĕр те, илсе тух кунта.
Эпир кĕтĕпĕр унччен..“
Иван, хăвăрт сирпĕнсе,
Кĕрсе кайрĕ сакайне.
Кĕчĕ те вăл, чул илсе,
ларчĕ пĕр юпа хыçне.

—Аскарах эс! Мĕн çĕретĕн!—
кăшкăраççĕ хурахсем.
„Вăй çитмест ман. Ещĕкре вĕт,

тимĕр ещĕкре вĕсем",—
тет Иван, хыт эхлетсе.
—Ун хăйĕн те укçи пулĕ:
ещĕкпех-çке вăрттăн мулĕ!
Кĕрсе тĕрĕслес, тесе,
ик хурахĕ умлăн хыçлăн
сиксе анчĕç сакайне;
тĕттĕмре ак, суккăр çынлăн,
вĕсем пычĕç сас енне.
Килхуçийĕ ăс çитерчĕ:
иккĕшне те чулпала
пуçран пачĕ те ӳкерчĕ,
хăй тапратрĕ кăшкăрма:
„Ах, тархасшăн, ан тивсемĕр!
Ан çаратăр хамăнне!
Ай, хама хуть хĕрхенсемĕр,
шеллĕр çамрăк çын пуçне!"
Çакăн хыççăн вăл ахлатрĕ,
мăйран пăвнă пек, аран
йынăшса кăшт хăрăлтатрĕ.
Сас памарĕ тек, кайран.
Çакна илтсен, кăшт кĕтсен,
пӳрте юлнă хураххи те
сикрĕ сакайне çӳлтен.
Сисеймерĕ, кун çамки те—
хап! тăвайрĕ, чул лексен.
Хай Иван ак хăпăл-хапăл
сиксе тухрĕ сыв пуçпах,
йывăр алăка хупса вăл
çапса лартрĕ пăтапах.

7

Тепӗр кунне, кӑнтӑрла,
пысӑк ушкӑн ҫынпала
пырса ҫитрӗҫ пуҫлӑхсем—
вулӑврисем, ялтисем.
—Тавай, Иван, илсе пар
тупса килнӗ пурлӑхна.
Кала чӑнне, ан пытар:
ӑҫтан тупрӑн эс ӑна?
Кала: вӑррисем ӑҫта?
Камсем вӗсем, хӑш ялтан?
Ху та эсӗ ку ӗҫре
пулман-и пӗр тӳпере?—
терӗҫ пуҫлӑх таврашсем,
хыттӑн пӑвӑртрӗҫ вӗсем.
„Хальччен эпӗ ҫынӑнне
шӑрпӑкне те вӑрламан,
ку ҫаратнӑ мул михне
тупса килтӗм ӑнсӑртран.
Ӳн ҫинчен ак ӗӗппипе
калӑп сире эп кайран,
халӗ мӗнпур пеккипе
паллаштарӑп чи малтан.
Тупса килнӗ япали те,
пур пек вӑрӑ-хураххи те
вӗсем пурте ман алра,
ак ҫак пысӑк „арчара!“—
тет те Иван халӑха,
урайӗнчи алӑка
хирсе уҫать лумпала.

Уçрĕ пăхрĕ сакайне
ўпĕнсе те тинкерсе.
„Пурнатăри-ха „туссем“,
таппа лекнĕ шăшисем!“
терĕ те вăл, шăхăрса
кĕрсе кайрĕ сакайне;
кĕчĕ—тухрĕ пăскартса
хурахсенĕн ушкăнне.

Вĕсем виçĕш те чĕрех,
хыпашлаççĕ пуççене,
ыйхă вуснă пек, текех
хупкалаççĕ куççене.
Сас памасть-ха пĕр çынни те.
Кĕç ак халăх хушшине—
тулли пурлăхăн миххи те
кĕрĕст! ўкрĕ урайне.
„Акă курăр, сарса тăкăр:
кунта пур-ха курмалли!
Чăнкăр-чăнкăр кĕмĕл-пăхăр,
хĕр, хĕрарăм япали,—
терĕ йĕкĕт халăха.
—Ак мĕн чухлĕ пурлăха
кашкăр йышĕ тăпăлтарнă—
терĕç тĕлĕннĕ çынсем.
—Ху эс мĕн майпа пултарнă—
тесе ыйтрĕç теприсем.
Паттăрланнă яш Иван
халь нимскер те пытармарĕ:
çĕвве кайсан, пĕр ялтан

тарса килнине каларĕ.
„...Çавăн чух çав, хыçалтан
хуса çитсе тытасран,
эп пытантăм армана.
Ак çаксем, виç тăмана,
пычĕç кĕчĕç çавăнта.
Мулĕ пулнă-мĕн унта...“
тесе хучĕ, пĕр вăрра кăшт
пысăк сăмсинчен туртса.
Вăл култарчĕ акăш-макăш,
ĕç синчен йăлт каласа.
Пĕтĕм халăх кăмăлларĕ,
ырăларĕ Ивана,—
ырăларĕ те мухтарĕ,
тав та турĕ халь ăна.
--Пур пек тупнă укçаран
чĕрĕк пайĕ—Ивана;
ытти пултăр халăхра,
тупĕç хуçисем ăна,—
терĕ халăх пĕр шутпа.
Виçĕ вăрă-хураха
илсе кайрĕç хуралпа,
айăпсемшĕн суд тума.

Çĕвĕç Иван, сар Иван
пурăнать халь пит аван:
çĕнĕ шурă пӳрт лартать,
капăр, янкăс тумланать,
Çĕв машинĕ туянать,
ăста çĕвĕç вăл пулать.

## ТУПМАЛЛИ

Стр.

Хыткукарсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

Ылттăн пашалу . . . . . . . . . . . . . . . . 9

Тăрнаккайпа тăрнасем . . . . . . . . . . . . 21

Çĕвĕç Иван . . . . . . . . . . . . . . . . . . 42

## ТӐРЛЕТНИ

| Стр. | Йĕрке: | Пичетленнĕ: | Вуламалла: |
|---|---|---|---|
| 12 | 2 аялтан | урш вĕшле | шур вĕшле |
| 35 | 12 „ | туп-тăр | тăп-тăрем |
| — | 13 „ | тăпинчене | тăпинчен |
| 54 | 14 çÿлтен | сикес-тухас çук. | сикес,—тухас çук. |

С. Элкер—*Юмахсем.*

Редактор А. Эсхель.

НТ 00405. Подписано к печати 8—I—1947 г.
Об'ем 2,5 п/л Зак. № 597 Тираж 5000 экз.

Отпечатано в Цивильской типогр. Управл. Полиграфпром. при Совете Министров Чувашской АССР

Цена / Хакĕ 3 руб. / тен.

С. ЭЛГЕР

# СКАЗКИ

На чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары * 1947